"Совет Союзĕн Геройĕ" ята – 80 çул

# Пирĕн паттăр ентешсем

Сакăр вунă çул каялла, 1934 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче, Совет Союзĕн Геройĕн ятне – уйрăмлăх паллин чи чаплă степеньне çирĕплетнĕ. Çак хисеплĕ ята патшалăх умĕнчи харпăр хăй тата коллектив тивĕçĕсемшĕн параççĕ. Вăл паттăрлăх кăтартнипе çыхăннă. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Совет Союзĕн Геройĕн ятне çапăçусем вăхăтĕнче хăюлăх тата паттăрлăх кăтартнăшăн 11 пин ытла совет салтакĕ тивĕçнĕ, вĕсем хушшинче 65-шĕ – Чăваш АССР-ĕнче çуралнисем. Пилĕк çын – Муркаш районĕнчен. Малалла вĕсемпе паллаштаратпăр.



**Григорий Алексеевич Алексеев** 1903 çулта Исетеркĕ ялĕнче çуралнă. 1925–1927 çулсенче Хĕрлĕ Çарта пулнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче 1941 çулхи ноябрьтенпе. Центральнăй фронтра çапăçнă. Рядовой. 1943 çулхи октябрĕн 16-мĕшĕнче Днепр урлă каçнă чухне пăларнă. Лоев поселокĕ çывăхĕнче сылтăм çыранра плацдарма тытса пынă. «Совет Союзĕн Геройĕ» ята 1943 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче панă. Ленин орденĕпе наградăланă.

**Яков Анисимович Анисимов (сăн ӳкерчĕкре)** 1906 çулта Уйкас Апаш ялĕнче çуралнă. Чуманкассинчи вулав çуртĕнче ĕçленĕ. Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ, Сĕнтĕр çар комиссарĕ пулнă. Хĕрлĕ Çарта 1938 çулхи октябрьтенпе. Украинăна, Румыние, Венгрие ирĕке кăларнă. Гварди капитанне Я.А. Анисимова «Совет Союзĕн Геройĕ» ята 1945 çулхи мартăн 24-мĕшĕнче вилнĕ хыççăн панă. Ленин, 1 степень Отечественнăй вăрçă, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе наградăланă.

**Борис Михайлович Васильев** 1913 çулта Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче çуралнă. Кашмаш шкулĕнче учительте ĕçленĕ. Хусанти авиаци институтĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ Çарта 1937 çултанпа. Çар летчикĕсен Борисоглебскри шкулне (1938 ç.), комиссар-летчиксен Каллинскри çар авиаци шкулне (1941 ç.) пĕтернĕ. Кăнтăр Хĕвел анăç, Сталинград, 1 Белоруссии фрончĕсенче çапăçнă. Истребительсен эскадрильин комиссарне Б.М. Васильева «Совет Союзĕн Геройĕ» ята 1941 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче панă. Истребительсен авиаци полкĕн командирĕ Б.М. Васильев подполковник çĕнтерĕве Берлин тӳпинче кĕтсе илнĕ. Ленин, 1, 2 степень Отечественнăй вăрçă орденĕсемпе наградăланă.

**Алексей Иванович Воробьев** 1915 çулта Çурлатри ялĕнче çуралнă. Муркаш шкулĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ Çарта 1936–1939 тата 1941–1945 çулсенче пулнă. Центральный, Брянск, Воронеж, 1 Украина фрончĕсенче çапăçнă. Взвод командирне гварди старшинине А.И. Воробьева «Совет Союзĕн Геройĕ» ята 1945 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче панă. Ленин, Хĕрлĕ Çăлтăр, 2 степень Отечественнăй вăрçă (икĕ хут) орденĕсемпе наградăланă.

**Илья Григорьевич Мешаков** 1924 çулта Пăсăрман ялĕнче çуралнă. Оринин шкулĕнче, Чăваш педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ Çарта 1942 çулхи августранпа. Автоматчиксен ротин рядовойне И.Г. Мешакова «Совет Союзĕн Геройĕ» ята 1944 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче панă. Çĕнтерӳ парадне хутшăннă. Ленин, "Хисеп палли" орденсемпе наградăланă.

Пирĕн тепĕр ентеш **Александр Артемьевич Быков** – Мухтав орденĕсен тулли кавалерĕ.1921 çулта Хуракасси выççăлккинче çуралнă. Кашмаш шкулĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ Çарта 1942 çулхи апрелĕн 7-мĕшĕнченпе. Старшина Калинин, Брянск, Хĕвел анăç, 2 тата 1 Белоруссии фрончĕсенче çапăçнă. Артиллерист.

# Вăрçа парăнтарнă çамрăклăх

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

"Эпĕ халĕ те аптрамастăп-ха. Кашни кун хусканусем тăватăп – акă мускулсем мĕнлерех", – çапла шӳтлесе калаçать паян ырă кăмăллă ветеран. 63 çул каялла çемье çавăрнăранпа яланах пĕрпĕрне килĕштерсе пурăнни палăрать Скворцовсем çине пăхсан.

"Эпĕ çак яла качча килнĕренпе пирĕн тантăшсем 200-е яхăн «леш тĕнчене» кайрĕç ĕнтĕ. Эпир пурăнатпăр-ха. Турри çакăн пек вăрăм ĕмĕр парнелессе шутламан та", – Яракра çуралса ӳснĕ Калиса Ефимовна пичĕ çинчи ăшă кулă куççульпе ылмашăнчĕ.

Вилĕмĕ вара çав хаяр вăрçă вăхăтĕнчех хĕре икĕ хутчен шелленĕ. Вун ултă çулхи Калиса 1943 çултан пуçласа 320-мĕш заводра (халĕ ăна РТИ завочĕ тесен ытларах пĕлеççĕ) вăй хума тытăннă. Çак заводра фронта валли снарядсем туса кăларнă. Пĕррехинче ĕç вырăнĕнче снаряд кăшт кăна çурăлман. Кайран татах пулнă кун пекки.

Пурнăç, тĕрĕсрех каласан, вăрçă никама та шелленмен вăл вăхăтра, Скворцовсем пек çамрăксен ăравне – уйрăмах.

Михаил Андреевича вăрçа 18 тултарсан, 1942 çулта ăсатнă. Каччă Украина виççĕмĕш фрончĕн стрелоксен 140-мĕш полкĕнче çапăçнă. Днепр юхан шывĕ урлă каçнă чухнехи çапăçура ăна ураран амантаççĕ. Аманнă хыççăнхи пĕрремĕш шухăшĕ те "эпĕ чĕрĕ-ха" тени пулнă. Çавăн чухнехи савăнăçа нимĕнле сăмахпа та каласа пама çук паллах. Ăна çав вырăнта е çавăн пек ларутăрура пулса курнă çын çеç туллин чухлама пултарать пулĕ. Çур çул салтакăн связистсен госпиталĕнче сипленме тивнĕ. Ун хыççăн кĕске вăхăтрах – танкист ăсталăхне алла илме. Çапла вара çамрăк танкист Курск пĕкки патĕнчи хаяр та юнлă çапăçусене хутшăннă. Чĕрĕ юлнă.

Михаил Андреевич вăрçăран 1947 çулта таврăннă.

Тыл ĕçченĕ Калиса Ефимовна, стахановка, мирлĕ пурнăç пуçлансан колхозра вăй хунă, столовăйĕнче повarta та тăрăшнă. Мăшăрĕ ĕмĕр тăршшĕпех механизаторта ĕçленĕ.

Çемье çавăрса 5 ача çуратса ӳстернĕ Скворцовсем. Шел пулин те, виçĕ çул каялла кĕçĕн ывăлĕ сарăмсăр вилсе кайнă. Паллах çак хуйхă ашшĕ-амăшĕн сывлăхĕ çине те витĕм кӳмесĕр иртмен. Унччен акă Михаил Андреевич пӳрт çивиттийĕ çине пăта çапма та хăех хăпарма пултарнă, Калиса Ефимовна та ирхи 5 сехетрен сĕм тĕттĕмччех кил картишĕнче, пахчара тăрмашнă.

Сумлă ветерансем паян та чăх-чĕп тытаççĕ, сурăхсем усраççĕ. Килти ĕçсене иккĕшĕ шăкăл-шăкăл калаçса туса пыраççĕ. Ачисемпе мăнукĕсем вара килсе пулăшаççĕ. "Эпир паян та вĕсемшĕн пĕчĕк ачасем", – тет аслă хĕрĕ.

Вунă мăнукпа кĕçĕн мăнук паян Скворцовсен. Вĕсем те ватăсене курса туслă пурăнаççĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Вăрçă ахрăмĕ

# "Эвакуациленисенчен юрлама, стройпа утма вĕренеттĕмĕр"

Москакасси ялĕнче пурăнакан Елена Пушкина сакăр вунă çулран каçрĕ ĕнтĕ, унăн ачалăхĕ вара иртнĕ синкер тапхăрпа пĕр килнĕ. Пурнăç вăл вăхăтрисене самай тĕрĕсленĕ çав. Иртнĕ çулсене Елена Александровна хурланса аса илет.

...Йăлтах йĕркеллĕ темелле, анчах та кĕтмен çĕртен пысăк хуйхă килсе хуçать çамрăк çемьене. Пĕр кунхине Лена, икĕ çул урлă каçнăскер, амăшĕсĕр тăрса юлать. Чăр-чăр пăхать ача куçĕ, иртнĕ кунсене каялла таврăсшăн тейĕн пĕчĕк Лена. Амăшĕ çумне тĕршĕнесшĕн пулас ăна-кăна йăлтах ăнланайман ача.

Çапла вара ашшĕн икĕ ачана ӳстерме тивет. Вăл колхоз утарçинче тимленĕ, аслашшĕ те ĕçлĕ çын пулнипе чылай пулăшнă. Çапах та кил-йышра хĕрарăм алли çитменни самай сисĕннĕ. Нимĕн те калаймăн, мăшăрсăр пурнăç тулли çемье мар тата ачасене те хĕрарăм тимлĕхĕ кирли куç кĕрет.

– Тавах Турра, ырă чунлă хĕрарăм, иккĕмĕш анне тупăннă, пирĕншĕн тăрăшма килĕшнĕ. Эпир ĕнтĕ тахçантанпах асатте-асаннесен шутĕнче, анчах та вăрçă çулĕсем, нушаллă та тертлĕ кунсем асран тухмаççĕ. Вăрçă пуçланнă чухне эпĕ тăхăр çулхи ачаччĕ. Çав вăхăта паянхи пекех лайăх ас тăватăп. Урама пухăннă мĕн пур çын макăрать, кашниех таçтаваскать, хумханать. Пирĕн атте те фронтовик пулса тăчĕ. Иккĕмĕш аннепе тăрса юлтăмăр. Эпир, ачасем, хамăр аслăланнине пĕр-икĕ кун хушшинчех туйса илтĕмĕр. Ялта ун чухне пĕтĕм ĕçе алăпа тăватпăр вĕт. Шкула вара çавах çӳрерĕмĕр-ха, вĕренӳ çулĕ октябрь–ноябрь уйăхĕсенче кăна пуçланатчĕ. Уй-хирти тыр-пула ватти-вĕтти пухса кĕртнĕ, ытти ĕç те вĕсем çинчех пулнă. Эпĕ вара çу кунĕсенче сысна кĕтĕвĕ пăхаттăм, чăх-чĕп ферминче те тăрăшсах ĕçленĕ. Пĕррехинче аслăрах тусăмпа пĕрле кĕтӳ пăхаттăмăр, вăл балалайка каласа юрлать, эпĕ ун çине самай ăмсанса пăхса лартăм. Паллах, манăн ун йышши инструмент çуккипе кулянтăм, инçех мар ана çине чупса кайрăм та купăста çулçи татса килсе балалайка пек тытса юрларăм.

Пирĕн яла та эвакуаципе килнисене вырнаçтарчĕç. Пурнăç нушаллă пулин те, хĕсĕнкелесе пурăнма тивнĕ ĕнтĕ. Çапла вара эпир Украина тата ытти халăх ачисемпе пĕрле хутшăнса çитĕнтĕмĕр. Вĕсенчен вăрçă юррисене вырăсла вĕрентĕмĕр, стройпа утма хăнăхрăмăр. Хĕллехи вăрăм каçсенче пĕрле пухăнса ларса фронта ăсатма алсиш-нуски çыхаттăмăр, кисетсем çĕлеттĕмĕр. Ача-пăчан выляс та, çывăрас та килет, çапах та фронтшăн тăрăшмаллине аванах ăнланаттăмăр. Çав тери йывăр пулнă, анчах та çĕнтерессе пурте шаннă. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсене Москакассине ĕçлеме илсе килнине те астăватăп. Эпир, ачасем, вĕсене курма чупаттăмăр, çапах та хĕрхенеттĕмĕр вĕсене. Хĕллехи кунсенче те тумĕсем çĕтĕкчĕ, хăйсем çӳхе тăхăнатчĕç, пуçĕсене татăксемпе картлатчĕç, – аса илет Елена Александровна.

Çĕвĕç ĕçне пĕлни кирек хăш вăхăтра та кирлĕ. Çавăнпах ĕнтĕ амăшĕ калаçса татăлнипе Ленăна пĕр ăста патне вĕренме ярать. Хăнăхмалла-вĕренмелле ун патĕнче çĕлет. Çамрăкскер питĕ вăр-вар пулнипе ятарлă пĕлӳ илмесĕрех çак ĕçе алла илет. Вăрçă пĕтсен те пурнăç йывăр килнĕ.

– Атте вăрçăран чĕрĕ таврăнасса питĕ кĕтеттĕмĕр. Ăна курнипе савăнăç куççулĕ пирĕн татти-сыпписĕр тухрĕ, çывăрма выртсан та ыйхă килмест. Çемьере арçын пурри епле тĕрек вĕт, – калаçăва тăсать вăл.

Ашшĕ фронтран таврăнсан агентра тăрăшма пуçлать. Лена ӳссе çитнĕ ĕнтĕ, çавăнпа та ăна кин тăвас текенсем хăтана килме пуçлаççĕ. Вун тăххăра çитсен Москакассинче Пушкинсен çемйи чăмăртанать. Хуçалăх бухгалтерĕнче, каярах чылай вăхăт бригадирта тимленĕ мăшăрĕпе вĕсем ачи-пăчине ура çине тăратаççĕ. Вăл тĕрлĕ ĕç ăсти, унăн пултарулăхĕпе Шупашкарти краеведени музейĕнче те паллашма пулать.

– Çĕнтерӳ кунĕ пуриншĕн те чи пысăк уяв пек асра юлчĕ. Халĕ пурнăç лайăхах çав, анчах та выçăлла-туталла пурăнни пирĕн сывлăха самай хавшатрĕ. Пĕр-пĕрне ăнланса, ырă сунса çеç пурăнасчĕ. Çĕр çинче яланах таса пĕлĕт, мирлĕ пурнăç хуçалантăр, – тесе калаçăвне вĕçлерĕ вăл.

Елена Александровнăн çулĕ сумлă пулин те, вăл питĕ пултаруллă. Тĕрлĕ обществăлла ĕçе активлă хутшăнать. Йывăç-тĕм лартассипе питĕ тимлет, мĕн йышшине кăна лартман пулĕ вăл, халĕ те çак ĕçе малалла тăсать. Сывлăхĕ çирĕп пултăр ĕнтĕ унăн.

**Р. МАКАРОВА.**

Вăрçă ачисем

# Унăн ĕçĕ пархатарлă

Корнил Корнилов 1934 çулхи майăн 8-мĕшĕнче Анаткасси ялĕнче çуралнă. Унăн ачалăхĕ йывăр вăрçă çулĕсене лекнĕ. Ултăрах шкула кайнăскер 1950 çулта Мăн Чурашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă, тепĕр икĕ çултан – Чăваш патшалăх учительсен институтĕнчен. Кунта вăл пултарулăхпа, тăрăшулăхпа ыттисенчен маттуртарах пулнă. Çапла вара математика учителĕн специальноçне алла илнĕ 18 çулхи каччă педагогика çулĕ çине тăнă.



Çар ретне тăма та вăхăт çитнĕ, çак тивĕçе вăл тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă. Унтан таврăнсан вара каллех Корнил Корнилович ачасене пĕлӳ парас ĕçе кӳлĕннĕ, Чуманкасси, Якаткасси, Купăрля, Чемей шкулĕсенче вăй хунă.

Çамрăк вĕрентекен пĕлĕве татах та тарăнлатма тĕллев тытнă. Çавна май каярах вара Чăваш патшалăх педагогика институчĕн физикăпа математика факультетне çул тытнă. Ăста учитель нумай çул хушши Турай шкулĕнче тимленĕ.

Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен ачасене çирĕп пĕлӳ парас, çĕр-шыв валли тивĕçлĕ çынсем тăвас тесе пĕтĕм вăй-халне панă. Çапла вара учительте, завучра, директорта вăй хунă Корнил Корниловича унăн пултарулăхĕпе тăрăшулăхне кура вырăнти хуçалăхри партком секретарьне суйлаççĕ. Çапах та ăна тăван Анаткасси шкулне пысăклатас ыйту канăç паман, çавăнпах та çак шкултах ĕçлеме пуçланă. Анчах та çак 9 çул вĕренмелли шкул тăвас ĕмĕт ачасен шучĕ чакса пынипе пурнăça кĕреймест.

Ăна В. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа юбилей медалĕпе, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă, "Чăваш АССР Культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ят панă.

Корнил Корнилович тивĕçлĕ канура пулин те, тĕрлĕ обществăлла ĕçе активлă хутшăнать. Вăл тимленипе Анаткасси шкулĕнче краеведени музейне йĕркеленĕ. Çак тăрăхри ветерансен канашĕн ертӳçи пулма та ăна шаннă. Анаткасси ялĕн историйĕ çинчен кăларнă "Отсюда мы родом" кĕнеке те вăл тимленипе кун çути курнă. Çавăн пекех Турайра ватă çынсен çуртне уçма та пысăк тӳпе хывнă. Пур енлĕ тăрăшуллă çынна юбилейпа унăн вĕренекенĕсем ячĕпе саламлатпăр, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Пенсисемпе социаллă тӳлевсем

# Пулăшу мелĕсем ӳсеççĕ

Чернобыльти атом электростанцийĕнчи инкеке пĕтерме хутшăннисене паракан пулăшу мелĕсем ӳссе пыраççĕ. Вĕсене паракан патшалăх пенсийĕн вăтам виçи апрельти ӳсĕме шута илсен уйăхне 13,6 пин тенкĕпе танлашать, уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕ – 1,9 пин тенкĕ.

Законодательствăпа килĕшӳллĕн аварие пĕтерме хутшăннисене, вĕсен ачисене, çавăн пекех сиенлĕ вырăнтан эвакуациленĕ çынсене социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерме пăхнă. Чернобылецсем ватлăха пула паракан пенсие вăхăт çитмесĕрех илме тытăнма пултараççĕ, инвалида тухнипе вĕсене пенси уйăрса параççĕ, çемьере тăрантаракана çухатнипе çăмăллăх условийĕсем пăхса хунă, çавăн пекех уйрăм условисенче икĕ пенси парассине тата уйăхсерен паракан укçа тӳлевне те икĕ хут пысăклатма пăхса хунă. Кунсăр пуçне сывлăха сиен кӳнĕшĕн социаллă хӳтлĕх органĕсем чернобылецсене компенсаци шучĕпе укçа тӳлесе тăраççĕ.

**Сăмах май. Чернобыльти инкеке пула радиаци илнисем республикипе 1,2 пин çын. Пенси фончĕн районти управленийĕ кун пеккисене 18 çынна пенси тӳлесе тăрать тата социаллă тӳлевпе тивĕçтерет. РФ Пенси фончĕ радиаци илнисене пенсисем тата социаллă тӳлевсем тӳлеме уйăхсерен 18,5 млн. тенкĕ уйăрать.**

**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.**